Нумаях пулмасть меломансем хăйсен юратнă юрăçисен кассетисемпе пластинкисене пухнă. Çак коллекци нумай вырăн йышăннă. Халĕ вара музыка ушкăнĕн пур альбомĕ те пĕр компакт-диск çине вырнаçать. Çакăншăн mp3 формата тав тумалла.

MP3 ФОРМАТЛĂ КУПĂС САССИ

mp3 формата иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсенче шутласа тупнă. 1987 çулта нимĕçсен Фраунхофер ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ аудио данныйсене хатĕрлемелли программа çырма пуçланă. Кĕçех программăна Motion Picture Expert Group (MPEG) ятлă пĕтĕм тĕнчери эксперт канашне тăратнă. Çак канаш аудио-видеоинформацине ĕçлемелли стандартсем хатĕрлет тата йышăнать. mp3 аббревиатура MPEG Layer 3 тени пулать.

mp3 аббревиатурăна халĕ music packing |сасăна пакетлани| тесе ăнлантараççĕ. mp3 форматра кĕвĕне тачăн пакетланине вăл сахал вырăн йышăнать. Енчен те ахаль кĕвĕн 1 минучĕ 10 мегабайт астăвăм йышăнать пулсан, çак кĕвĕн 1 минучĕ mp3 форматра 1 мегабайт кăна пулма пултарать.

Ахаль музыка файлĕсене mp3 формата кодировка тăвакан программăсемпе куçарма пулать. Вĕсем пурте пĕр схемăпа ĕçлеççĕ. Чи малтан сасă файлĕсене вăхăтпа тан пайсем — фреймсем — çине пайлаççĕ. Малалла программăсем кашни фреймпа уйрăм ĕçлеççĕ. Фрейм цифра фильтрĕсем урлă тухать. Вĕсем сасăна тĕрлĕ тăтăшлăхпа, хăватпа сигналсем çине уйăраççĕ. Çакăн чухне нумай сасă щăрахăçланать. Çак процеса «квантлани» теççĕ. Çын хăлхи илтмен е янăх илтнĕ сигналсем пур.

Тĕслĕхрен, эпир 20 000 герцран ытла тăтăшлăх сасăсене уйăраймастпăр. Пĕрпĕр тăтăшлăха çывăх та, анчах унран вăйлăрах илтĕнекен сасăсене йышăнмастпăр. Хытă илтĕнекен сасăсем хыççăн пыракан сасăсене те эпир пĕр хушă илтместпĕр. Çак сасăсем аудионоситель çинче пур, вĕсем нумай вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенчен хăтăлсан (профессионалсем ăна фрейма хĕстерни тесе калаççĕ) музыка файлĕ пĕчĕкленет. Анчах та mp3 формат эпир илтекен сасăсенчен хăшĕ-пĕрне те тасатать. Калăпăр, mp3 форматра 16 000 герц тăтăшлăхĕнчен пысăкрах сасăсем çырăнмаççĕ.

Пĕр mp3 файл тепринчен пысăкрах пулма пултарать. Файл пĕчĕкрех пулсан компакт-диск çине нумайтарах информаци кĕрет. Тепĕр енчен, файла мĕн чухлĕ хĕстерен, çавăн чухлĕ унăн пахалăхĕ чакать. Çакă пиртен хăшĕ-пĕрне килĕшмесен те пултарать. Битрейт çеккунтра 320 килобитран пуçласа 16 килобитчен улшăнма пултарать. Битрейт пысăкрах пулни файла перекетлĕн хĕстернине пĕлтерет.

Çеккунтра 320 килобит битрейт пулсан, аудиофайл 4 хут пĕчĕкленет. Интернетран çеккунтра 128 килобит битрейтпа çырнă mp3 файлсене уçласа илме пулать. Вĕсене уçлама та çăмăл. Компакт диск çине 74 минут илтĕнекен кĕвĕ вырăнне 650 минут кĕрет. Çеккунтра 256 килобитпа çырнă кĕвĕ чи оптималлă шутланать.

ЭПĔ ПУРНĂÇА СУЙЛАСА ИЛЕТĔП

Манăн алăра Михаил Булгаковăн «Морфий» хайлавĕ. Вулатăп: «Смерть медленно овладевает наркоманом, лишь только вы на час или два лишаете его наркотика... человека нет. Он выключен. Движется, тоскует, страдает, полутруп. Он ничего не хочет, ни о чем не мыслит, кроме наркотика...»

Мĕн вăл наркотик, мĕншĕн хăш-пĕр яшсемпе хĕрсем наркотика кăмăлласçĕ. Нумай çынна çак ыйту канăç памасть. Эпĕ те вĕсен хушшинче. Тĕлĕнмелле! Эпир, çамрăксем, çав тери илемлĕ, кăсăклă тата асамлă тĕнчере пурăнатпăр. Наркоман пуласси пирки, наркотиксенчен вилме пултарасси пирки пачах та шухăшламастпăр. Яш чух усал шухăша камăн ăша хывас килет. Çавна пулах ĕнтĕ хăш-пĕрисем наркотиксен ытамне кĕрсе ўкеççĕ. Наркотикпа туслашасси - йывăр ĕç мар. Пĕрисем - кайф туяссăн, теприсем - проблемăсенчен аякка каясшăн, виççĕмĕшсем — ашшĕ-амăшĕ ăса вĕрентнине итлесе йăлăхнипе наркотик серекине лекеççĕ. Пĕрремĕш дозăна «юлташсем» тўлевсĕрех тутанма параççĕ. Кайран вара, килĕшрĕ пулсан, унăн укçа тўлес пулать. Пуçланать вара: укçа тупас, наркотик илес... Укçа — наркотик... Тепĕр дозăшăн эсĕ пуринчен те укçа ыйтма тытăнатăн, кĕлмĕçленетĕн, суятăн, вăрлатăн, вĕлĕретĕн, анчах сана никам та хăйĕн ирĕкĕпе пĕр пус та памасть. Пĕртен-пĕр дозăшăн эсĕ хăвăн чунна шуйттана пама хатĕр. Санăн ухмаху, ăссăрлăх çинче теприсем миллион тăваççĕ, чаплă керменсенче пурăнаççĕ, тутлă апат çиеççĕ, ют патшăлăхсенче канаççĕ, хаклă йышши çи-пуç тăхăнаççĕ... Эсĕ наркотик илес укçапа дискотекăна, савнипе пĕр-пĕр çăлтăрăн концертне кайнă пулăттăн, компьютер илнĕ пулăттăн... Çук. Санăн пĕтĕм укçана наркотик сутакан патне илсе каймалла, ăна пуйтармалла. Кайф часах иртсе каять, анчах халĕ эсĕ наркотиксĕр пĕр кун та пурăнма пултараймастăн. Эсĕ — наркотик чури! Вăл саншăн чи çывăх тус, юрату, çемье, пурнăç та. Эсĕ хăвăн мĕскĕн пурнăçна дозăшăн иттрететĕн. Çакăн пек пуласса эсĕ ĕненнĕи. Иккĕленетĕп. Чылайăшĕ: «Тутанатăп та пăрахатăп», теççĕ. Анчах ун пек пулма **ПУЛ-ТАРАЙ-МАСТЬ**! Вăл миф, юмах!!!

Наркотик тытăкăнĕчи çыннăн часах «ломка» пуçланать. Санăн ўт-пў таврăнса тухасла, пин-пин çĕçĕпе тирнĕ пек ыратать. Асапланни — вилĕмрен те хăрушăрах. Çапла вара 4-5 çул иртме пултарать. Ун хыççăн — вилĕм. Хăш-пĕрисене вăл наркотикпа алхасма тытăнсанах тепĕр 6-8 уйăхранах Леш тĕнчене илсе каять. Эсĕ çамрăк - çав вăхăтрах эсĕ вилнĕ. Наркоманин чи çывăх тусĕ — СПИД. Пянхи кун СПИДран эмел те çук, унран сипленме те пулмасть. СПИДсăр пуçне наркоман В,С гепатичĕпе, пĕвер циррозĕпе чирлет.

Эпир наркомание чир теме хăнăхнă, анчах та вăл нимĕнле чир те мар. Астуса тăрăр! Наркомансенчен 10 % кăна çак хăрушă тăшманран хăтăлма пултарать, шкул ачисенчен вара 1% Çавăнпа та пуçа минретекен япаласенчен мĕн пур вăйран аякка тарăр! Енчен те эсĕ халĕ наркотиксемпе «алхасатăн» пулсан — чарăн. Аннў, тăванусем, тусусем, чи çывăх çыннусем пирки шухăшла! Вĕсем пирки шухăшламасан хăвăн çинчен хухăшла. Кама эсĕ кирлĕ. Наркомансем — никамшăн та кăсăклă мар.

Туссем, сунăн пурнăçунта наркотиксем вали вырăн ан пултăр! Пурнăçа суйласа ил!

Алексей,
Калайкасси шкулĕ

ХЫÇАЛТИ ПАРТА
Редакци адресĕ: 429541, Чăваш Республики, Муркаш районĕ, Калайкассинчи вăтам шкул
Çăматшкулăн компьютер классĕнче калăпланă.
электрон адресĕ: interhypar@mail.ru
Бильд-редактор: Александр Степанов.
Тĕп редактор: Владимир Кожевников.
Редактор çумĕ: Эльвира Портнова. Корреспондентсем: Лариса Осипова, Таня Шарикова, Оля Кошкина, Оля Аксяндарова

2 ПИН ДОЛЛАР ТАТА НОРВЕГИЕ ÇУЛ ÇЎРЕВ ВЫЛЯСА ИЛЕР *3 стр.*

Кайри мала!
ХЫÇАЛТИ ПАРТА
1(01) 2006
Шкул ачисен хаçачĕ Чўк 23-мĕшĕ — РАШТАВ 5-мĕшĕ

САВĂК КĂМĂЛ ПАРНЕЛЕТПĔР!

А.Г.Николаев ячĕллĕ Калайкасси вăтам шкулĕнче çулталăка яхăн «Спринг» çамрăк волонтерсен отрячĕ ĕçлет.

Унта 1-11 классенче вĕренекенсем çўреççĕ. Отряд членĕсен тĕп тĕллевĕ — ырă ĕçсем тăвасси, ватăсене пулăшасси, çамрăксене ырра вĕрентесси.

Çак кунсенче те «Спринг» отряда кĕрекен «Чĕкеç» ачапăча фольклор ушкăнĕн (вăл ытларах 5-мĕш класра вĕренекенсенчен тăрать) Шомикри психо-неврологи интернатĕнче ыркăмăллăх концертчĕ иртрĕ. Унта сипленекенсем ачасене çав тери хапăл туса кĕтсе илчĕç, концертри илемлĕх номерĕсем хыççăн та тăваллăн алă çупса хавхалантарчĕç.

Концерт хыççăн ачасене интернат ертўçисем вĕри чейпе тата пылак çимĕççемпе сăйларĕç.

«Чĕкеç» ачисем каланă тăрăх, çакăн евĕрлĕ концертсем татах та пулмалла, мĕншĕн тесен вĕсем çынсене лайăхрах пулма, тĕнчене ырăрах тума вĕрентеççĕ.

Ачасем Шомикри психо-неврологи интернатне татах та килме шантарчĕç.

ХАЮЛЛĂРАХ ПУЛМАЛЛА

Настя Иванова (Очăкасси шкулĕ): «Иртнĕ вĕренў çулĕнче ирттернĕ «Çеçпĕл кăвайчĕ» вулакансен конкурсĕнче Çеçпĕл сăввисене вуласа пĕрремĕш вырăн йышăнтăм. Тепĕр ир çак хыпара радиопа та пĕлтернĕ. Пурте мана саламлаççĕ, маншăн савăнаççĕ. Тăвансене те, ял çыннисене те ырă хыпар савăнтарать иккен. Çынсен умĕнче намăс курмалла мар пурăнасчĕ-ха пурнăçа».

Яков Дедов (Очăкасси шкулĕ): «Шкулта ирттерекен тĕрлĕ конкурссенче сценкăсем лартатпăр. Калаçу енĕпе яланах мала тухатăп. Сăвăсем те вулама юрататăп. Эпĕ калавсем, сăвăсем çыратăп. Хальлĕхе район шайĕнчи ăмăртусенче мала тухайманха. Пысăк сцена çине тухма шикленмелле пек.

«Хăюллăрах пулмалла пурнăçра, чĕмсĕр пулмалла мар»,— тет мана манăн вĕрентекенĕм Фаина Аркадьевна. Хам çырнă хайлавсене хаçата ярса пама та кăмăл пур. Тен, пичетлĕç те...»

ШКУЛТА ÇĔНĔ ПРОЕКТСЕМ

Нумаях пулмасть Муркаш районĕнчи Ориниино шкулĕнче 10-11 классем «Чăтăмлăх — вăл..» темăпа çавра сĕтел ирттерчĕç.

Шкулти А. В. Рожкова социалă психолог «чăтăмлăх» сăмахăн пĕлтерĕшне уçса пачĕ. Çавра сĕтелте хутшăнакансенчен кашни хăйĕн чăтăмлăхĕ мĕнле пулнине хут çине çырса хучĕ. Вĕсем тĕрлĕлĕхе тата ытти çынсене чăтăмлă, шўте ăнланаççĕ иккен.

Шкулти психолог «Эпĕ пурăнакан тĕнче...» ятлă чăтăмлăх проектне йĕркелесси çинчен пĕлтерчĕ. Çак тĕллеве пурнăçлама шкул хаçатне кăларнă, эмблема ўкернĕ тата 3 ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ. Вĕренекенсем хăйсен проектне çине тăрса хўтĕлерĕç.

УÇĂ АЛĂКСЕН КУНĔ

Чўк уйăхĕн 8-мĕшĕнче Иван Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ пулас студентсем валли хăйĕн алăкĕсене уçрĕ.

Эпир, паянхи 11-мĕш класра вĕренекенсем, унта хаваслă та савăк кăмăлпа кайрăмăр. Университет республикăри шкулсенчен килнĕ хăнасене хапăл туса кĕтсе илчĕ. Студентсем пире хăйсен факультечĕсемпе çывăхрах паллаштарчĕç, тĕрлĕ буклетсем, листовкăсем валеçсе пачĕç. Истории факультечĕ «Сундук» ятлă хаçатпа савăнтарчĕ. Унта пĕлмелли, кăсăкли, усăлли нумай пулчĕ. Унсăр пуçне университетăн акт залĕнче пирĕнпе калаçу ирттерчĕç, концерт курма та тўр килчĕ. Физикăпа математика факультетĕнче вĕренекен студентсем спорт ташшипе тĕлĕнтерчĕç, ытти факультетсем те хăйсене лайăх енчен кăна кăтартрĕç. Концерт хыççăн студентсемпе паянхи шкул ачисем тĕрлĕ факультетсем тăрăх экскурси ирттерчĕç. Çапла майпа кашни ача килĕшнĕ факультет çинчен ытларах пĕлме, кăсăклантаракан ыйтусем çине хуравсем тупма пултарчĕ.

Лариса ОСИПОВА,
Калайкасси шкулĕ.